Района йĕркеленĕренпе 65 çул çитнĕ май

# Çĕнĕлле ĕçлесси – кун йĕркинчи ыйту

«Пахалăхран хисеп патне», – çакнашкал тĕллевпе ĕçлет паян Чăваш Республикинчи «Россельхозцентр» ФГУ филиалĕн Муркаш районĕнчи уйрăмĕ. Виталий Пименович Морозов ертсе пыракан коллектив çак кунсенче районти ял хуçалăх производство кооперативĕсемпе хресчен (фермер) хуçалăхĕсем çитес çур акине епле хатĕрленнине, вĕсен çуртри вăрлăхĕн пахалăхĕ епле шайра пулнине тишкерет-хаклать, аталанăвĕ те туллин куç умне тухать.

... Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçи хыççăн халăх хуçалăхне ура çине тăратасси пĕрремĕш вырăнта тăракан чи кăткăс та йывăр тĕллев пулнă. Районта тивĕçлĕ пĕлӳ илнĕ агрономсем çителĕксĕрри, кашниех хăйĕн ĕç опычĕ çине таянса ĕçлени, паллах, малалла каймалли çул пулман. Анчах пурнăç вăрçă ишĕлчĕкĕнчен тăрса ӳсĕм çулĕпе малалла кайма ыйтнă: выранлă сĕнӳсем парать. Шурă халатлă агрономсем хăйсен ĕçĕнче ăста. Чĕрĕк ĕмĕр ытла çак ĕçре вăй хуракан Полина Порфирьевна Замятина, пĕрремĕш кун мар вăрлăх пахалăхне тĕрĕслессипе тимлекен Альбина Налимовапа Рената Александрова, Алесей Семенов çĕр ĕçченне тивĕçлĕ сĕнӳсем пама яланах хатĕр. Çакă вăл паян. Çав вăхăтрах пуян опытлă инспекцин историйĕ те чухăн мар. Историре вара районти агрономсемпе пĕрле пĕр тĕллевпе малашлăха пăхса ĕçлени, йывăрлăхсем умĕнче пуç усманни.

– Кирек епле бизнес та партнерсем пĕр-пĕрне шаннинчен пуçланать. Пирĕн ĕç те ку тĕлĕшпе урăх çулпа каймарĕ, - каласа парать 26 çул районти вăрлăх инспекцине ертсе пынă, районти çĕр ĕç культурине тивĕçлĕ шая çĕклессипе ырми-канми ĕçленĕ Александра Федоровна Анисимова. Истори хĕвне шаларах кĕрсен вара районти ял хуçалăх отраслĕн гектар пуçне 7-14 центнер тырă-пулă илнине кая хăвармалла пулнă. Çĕр-шыв тĕрекленнĕ тата наука аталаннă май çĕр ĕçĕнче тырă-пулăн çĕнĕ сорчĕсем кун çути курнă, ял хуçалăхне минераллă удобренисемпе çĕнĕ техника килме пуçланă. Аталану çулĕ уçăлсах пынă. Çыварса ан юл кăна! Районти çĕр ĕçченĕсем çапла тунă та.

Иртнĕ ĕмĕрĕн 60-мĕш çулĕсен пуçламăшĕнче районта вăрлăх тĕрĕслекен лабораторисем уçăлнă: Муркашра тата Мăн Сĕнтĕрте. Мăн Сĕнтĕрти лабораторие пĕрремĕш кунсенче Анна Васильевна Уткина ертсе пынă, ун хыççăн – Нина Прокопьевна Прокопьева. Муркашри вăрлăх тĕрĕслекен лабораторин малтанхи кунсенчи ĕçĕсемшĕн Мария Васильевна Поленова ответлă пулнă. Йывăр пулнă, анчах лаборатори ĕçченĕсем пуç усса ларман. Районти пĕрлешӳллĕ хуçалăхсем те çак лабораторисем ĕçлеме пуçласан хăйсене вăрлăх ыйтăвĕсемпе ĕçлеме çăмăлланнине туйса илнĕ.

Вăхăт иртет. Çĕнĕлĕх пурнăçа кĕрсе пынă май лабораторисем те пĕр вырăнта тăман. 1969 çулхи çу уйăхĕн 27-мĕшĕнче Чăваш АССР Ял хуçалăх министерствин приказĕпе килĕшӳллĕн вăрлăх тĕрĕслекен лабораторисен никĕсĕ çинче Муркаш районĕн патшалăх вăрлăх инспекцине туса хунă. Çав кунран пуçласа 1978 çулхи февралĕн 28-мĕшĕччен ăна Зоя Александровна Савельева ертсе пынă, асăннă инспекци аталанăвне пысăк тӳпе хывнă. Ун хыççăн çак ответлă ĕçре 4 уйăх Кронид Ефимович Сретинский ĕçленĕ. 1978 çулхи чӳк уйăхĕн 16-мĕшĕнчен пуçănса 1979 çулхи çурла уйăхĕччен инспекцие Юрий Арсентьевич Захаров ертсе пынă. Вăрлăх инспекцийĕ хăйĕн ĕçне пĕлсе тата наука çитĕнĕвĕсене шута илсе туса пынăран районта çак тапхăрта тырă-пулă тухăçĕ те палăрмаллах ӳснĕ. Малта пыракан хуçалăхсем тухăça 25-30 центнер патне çитерме те пуçланă. Ку, паллах, пысăк ӳсĕм пулнă.

– Мĕн тунипе лăпланмалла маррине эпĕ çак ĕçе кӳлĕнсен пĕрремĕш кунранах хамăн тĕп тĕллев туса хутăм. Мана хуçалăхсен агрономĕсем ăнланнипе эпир лава пĕрле туртма пуçларăмăр. Вун-вун çĕнĕ сорт хуçалăхсене килчĕ, тыр-пул акса ӳстерес çĕрти вуншар çĕнĕ ĕç мелĕ çĕр ĕçченĕн практикине кĕчĕ. Вĕсем паян та куç умĕнче. Вĕсене пăхатăп та – ыранхи кунпа пурăнакан хуçалăхсем малалла кайнишĕн чун савăнать, анчах çĕр ĕçне лайăхлатассипе туса çитермеллисем татах та нумай-ха, – терĕ 1979-1995 çулсенче патшалăх вăрлăх инспекцине ăнăçлă ертсе пынă Александра Федоровна Анисимова хыçа юлнă çулсене кăмăллă аса илсе.

Юлашки 12 çулта патшалăх вăрлăх инспекцине Александр Ильич Павловпа Полина Порфирьевна Замятина ертсе пычĕç. Каламалла, кашниех ырăпа палăрса юлчĕç хăйсене шаннă ĕçре. Кăçалхи кăрлач уйăхĕн 15-мĕшĕнчен çак ĕçре Виталий Пименович Морозов ĕçлеме пуçларĕ. Коллектив унăн пуçарăвĕсенче те ыррине кăна кĕтет.

Вăрлăх инспекцийĕн аталанăвĕнче ырă вăхăтсем те сахал мар пулнă. Акă малтанхи самантра районта вăрлăх хуçалăхĕсем виççĕ пулнă: «Свобода», «Новая Юнга», Киров яч. хис. (Турай) хуçалăхсем. Вĕсем Ял хуçалăх министерствин хушăвĕпе наука станцийĕнчен элитăллă тата суперэлитăллă вăрлăхсем туянса пысăк репродукциллĕ вăрлăха хăйсем урлă районта сарнă. Вăрлăхпа усă курассине патшалăх вăрлăх инспекцийĕн специалисчĕсем тĕрĕслесех тăнă.

Районта тыр-пул вăрлăхĕпе пĕрлех нумай çул ӳсекен культурăсен вăрлăхне сарассипе те ĕçсем кал-кал пынă. Кунта вăрлăх туса илессипе тата ăна ытти хуçалăхсене сарассипе «Новая Юнга», «Свобода», «Хлебороб» хуçалăхсем ыттисемшĕн тĕслĕх пулса тăнă. Çав çулсенче кашни хуçалăхрах вăрлăх лаптăкĕсем пулнă.

Район паян кăна мар, чылай маларах та çĕр улми туса илессипе республикипех курăмлă пулнă. «Иккĕмĕш çăкăрăн» элитăллă вăрлăхне туса илессипе «Ударник» хуçалăх ăнăçлă ĕçлесе пынă. Йӳçкассисемпе пĕрлех Е. Андреев яч. хис., «Свобода» хуçалăхсем те çĕр улми вăрлăхĕ сарассипе палăрса тăнă.

Паян та малашлăха пăхакан хуçалăхсем паха вăрлăхпа ĕçлессине кун йĕркинчен кăлармаççĕ. Çакна ырламалла кăна.

**Анатолий БЕЛОВ.**



**Районти вăрлăх инспекцийĕн ĕçченĕсемпе районти агрономсем – Муркаш енри çĕр ĕçĕн профессионалĕсем.**

Аукцион

## Администрация Моргаушского района Чувашской Республики извещает о проведении открытого аукциона

**Форма торгов** - открытый аукцион.

**Наименование аукциона** - открытый аукцион на право заключения договора купли-продажи имущества Моргаушского района Чувашской Республики, подлежащего приватизации в 2008 году.

**Основание проведения аукциона** – постановление Главы администрации Моргаушского района Чувашской Республики №606 от 24.10.2008 года

**Заказчик аукциона** - Администрация Моргаушского района Чувашской Республики.

**Аукцион проводит** - Общество с ограниченной ответственностью «Юридическая фирма «Гарантия Права»

Место нахождения: Чувашская Республика, г. Чебоксары, ул. Гагарина, 35 «б»

Почтовый адрес: 428000, Чувашская Республика, г. Чебоксары, ул. Гагарина, 35 «б»

Номер контактного телефона (факса) (8352) 28 - 29 – 89, +7 905 029 12 03

Адрес электронной почты: garantiaprava@mail. ru

**Предмет аукциона:** право заключения договора купли-продажи имущества Моргаушского района Чувашской Республики, подлежащего приватизации в 2008 году.

**Начальная (стартовая аукционная) цена:** начальная (стартовая аукционная) цена земельного участка определяется на основании отчета об оценке, выполненного независимым оценщиком.

**Перечень имущества Моргаушского района Чувашской Республики, выставленного на торги (аукцион):**

**Лот №1** – здание садика, (литера А), общей площадью 1015,10 кв.м., инвентарный номер БТИ 4279, расположенное на земельном участке с кадастровым номером 21:17:020303:66, категории «земли населенных пунктов», разрешенное использование «для содержания и обслуживания зданий и сооружений», местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ильинское сельское поселение, д. Тренькино, ул. Снежная, дом 13 площадью 1775 кв.м.

Ограничения (обременения) земельного участка не имеется.

**Начальная (стартовая аукционная) цена участка –** 526000,00 (пятьсот двадцать шесть тысяч) рублей.

Сумма задатка – 20% от начальной (стартовой аукционной) цены имущества.

Шаг аукциона – 5% от начальной (стартовой аукционной) цены имущества.

**Срок, место и порядок предоставления аукционной документации.**

Документация об аукционе предоставляется по адресу:

Чувашская Республика, г. Чебоксары, ул. Гагарина, дом 35 «б».

Срок предоставления: с 11 февраля 2009 года по 16 марта 2009 года.

Порядок предоставления документации об аукционе: в электронном виде на основании заявления любого заинтересованного лица, поданного в письменной форме, в течение двух рабочих дней со дня получения соответствующего заявления.

Плата за предоставление документации об аукционе не взимается.

Заявки на участие в аукционе предоставляются по адресу:

Чувашская Республика, г. Чебоксары, ул. Гагарина, 35 «б».

Сроки предоставления заявок: с 11 февраля 2009 года по 16 марта 2009 года.

**Обеспечение заявки на участие в аукционе.** Размер обеспечения заявки на участие в аукционе составляет двадцать процентов начальной (стартовой аукционной) цены имущества.

Банковские реквизиты для перечисления денежных средств обеспечения заявки на участие в аукционе: ***ООО «Юридическая фирма «Гарантия Права»***

***ИНН/КПП 2130007402/213001001***

*р/с 40702810300960000813 в Чебоксарском филиале ОАО «Банк Москвы»*

*к/с 30101810200000000767*

***БИК 049706767***

Назначение платежа: залоговая сумма за участие в аукционе.

**Место, дата и время проведения аукциона.**

Аукцион проводится по адресу:

Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Мира, 6.

Время проведения аукциона 17 марта 2009 года 09 часов 30 минут по московскому времени.

**Директор**
**ООО «Юридическая фирма «Гарантия Права»**
**Денисов А.И.**

Шкул пĕтерекен çамрăксем валли

# Пурнăç çулĕпе – çирĕп утăмпа

Эпĕ калас сăмахсем кăçал вунпĕрмĕш классенчен вĕренсе тухакансене пырса тивеççĕ. Мĕн пĕлмелле-ха паян хăйсен пурнăçне милици ĕçне халаллас текен çамрăксемпе вĕсен ашшĕ-амăшĕсен? Кун пирки хаçатра калаçманни чылай пулса кайрĕ. Чăн малтан çак системăра ĕçлеме кăмăл, чун ыйтни кирлĕ. Иккĕмĕш вырăнта шкулта илнĕ тарăн пĕлӳ тата çирĕп сывлăх. Шалти ĕçсен пайĕнче ĕçлеме вара вакансисем тупăнсах тăраççĕ. Паян пирĕн патăмăрта çĕр ытла йĕрке хуралçи ĕçлет пулсан та эпир вăтам пĕлӳ илнĕ тата çарта пулнă çамрăксене милиционер пулса ĕçлеме, юридици пĕлĕвне илнĕ яшсемпе хĕрсене участковăй тата следователь ĕçĕсене, тивĕçлĕ пĕлӳллисене инженер-электроника, экономика пĕлĕвĕллисене потребительсен рынокĕнче право йĕркине пăснипе кĕрешекен инспектор пулса ĕçлеме йышăнма хатĕр. Куратăр ĕнтĕ, таса кăмăллă та çирĕп сывлăхлă çамрăк валли инçе каймасăрах ĕç вырăнĕ пур: тивĕçлĕ пĕлӳ ил те ĕçле.

Пирĕн патăмăра ĕçе килес текенсем ытларах Шупашкарти вĕренӳ заведенийĕсенчех пĕлӳ илейреççĕ. Акă паян пирĕн патăмăрта ĕçлекенсенчен пĕр пайĕ куçăмсăр майпа Шупашкари милици шкулĕнче, Мускаври гуманитарипе экономика институчĕн Шупашкарти филиалĕнче, Мускаври патшалăх уçă университечĕн Шупашкарти филиалĕнче, кооперации институтĕнче вĕренеççĕ. Кусемсĕр пуçне куçăмлă йĕркепе РФ ШĔМĕн Мускаври, Санкт-Петербургри, Орелти, Саратоври юридици шкулĕсенче, ятарлă вăтам пĕлӳ паракан вĕренӳ заведенийĕсенче юриста вĕренекенсем пур. Каласа хăвармалла, паян пирĕн патăмăрта ĕçлекен офицерсем хушшинче Чăваш патшалăх университечĕн юридици факультетĕнчен вĕренсе тухнисем те, Правăпа управлени академийĕнче пĕлӳ илсе тухнисем те куллен ĕçе тухаççĕ.

Алă усса ларман çыннăн ӳсĕм пулатех. Акă пирĕн патăмăрта ĕçлекенсем хушшинче юлашки çулсенче ЧР Президенчĕн стипендине тивĕçнисем те пĕрре мар пулчĕç. Çавăн пекех кунта ĕçлекен 40 сотрудник тĕрлĕ вăхăтсенче служба командировкисене Çурçĕр Кавказраирттерет. Вĕсенчен кашнийĕнех патшалăх наградисем (медальсем) пур. Çак тĕслĕхсем пирĕн патра ĕçлекенсем патшалăх умĕнчи ĕçе тӳрĕ чунпа пурнăçлани пирки калаççĕ.

Кăçалхи 11-мĕш классемшĕн калатăп: кам та кам хăйĕн пурнăçне милици ĕçĕпе çыхăнтарма пăхать, çак вĕренӳ заведенийĕсем сирĕн умăрта алăкĕсене уçĕç. Ку ыйтăва паянах хускатни вырăнлă. Çамрăксене маларах асăннă вĕренӳ заведенийĕсемсĕр пуçне çаксене сĕнме пултаратăп: РФ ШĔМĕн Чулхулари академийĕн Шупашкарти филиалĕ (çакăнтан вĕренсе тухнисем пирĕн патăмăрта 26-ăн ĕçлеççĕ), РФ ШĔМĕн Мускаври экономика хăрушсăрлăх академийĕ, РФ ШĔМĕн шалти çарсен (внутренние войска) Пермьри çар институчĕ (унта кăçал кăна районти шалти ĕçсен пайĕ урлă 3 çамрăк вĕренме кĕчĕ).

Шалти ĕçсен пайĕ хăйне валли кадрсем хатĕрлессипе алă усса лармасть. Ку вара лăпкă пурнăç малашлăхĕ. Паян пуçланă калаçупа кăçал шкул пĕтерекен çамрăксемпе вĕсен ашшĕ-амăшĕсем паянах пирĕн пата кĕрсе калаçма пултараççĕ.

Вĕренме 17-25 çулсенчи граждансене йышăнаççĕ. «Юриспруденци» специальноçа вĕренме кĕрекенсен (5 çул вĕренмелле) Çĕр-шыв историйĕпе, обществознанипе, вырăс чĕлхипе тата литературипе (пуринпе те çырса), физкультурăпа (нормативсем пурнăçласа) экзаменсем тытмалла. Вĕренӳ заведенийĕсене «Финансы и кредит» специальноçпа (5 çул вĕренмелле) вĕренме кĕрекенсен математикăпа, вырăс чĕлхипе тата литературипе, обществознанипе çырса тата физкультурăпа нормативсем пурнăçласа экзаменсем тытмалла.

**Л. КРОЛЬКОВА,**
**шалти ĕçсен пайĕн пуçлăхĕн кадрсемпе ĕçлеме пулăшаканĕ.**